Выльăх отраслĕн иртнĕ хĕл кунĕсенчи тата кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ĕçне пĕтĕмлетсе

# «Чĕркуççи çинчен, хамăр çĕкленмесен, пире никам та тăратмĕ»

*Ильич яч. хис. хуçалăхри брезент айĕнчи çак сысна витти 500 пуç самăртмалăх. Кунта электроэнерги, апат, ĕç вăйĕ перекетлемелли çĕнĕ технологисем – пурте пĕр чăмăрта.*



Ĕçе тăтăшах пĕтĕмлетсе пыни, çĕнĕлĕхсене хăрамасăр алла илни, наука вĕрентнĕ пек ĕçлени ўсĕмсен çулне уçни тата производство калăпăшĕсене ўстерме пулăшни пирки пĕртте иккĕленӳ çук. Çак чăнлăха район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕ нихăш çул та иккĕмĕш вырăна хăвармасть. Акă, иртнĕ эрне кун, июлĕн 28-мĕшĕнче, обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен иртнĕ хĕл кунĕсенчи ĕçне пĕтĕмлетни тата кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ĕç кăтартăвĕсене тишкерни те çавнах çирĕплетекен тĕслĕх пулчĕ. Пирĕн районăвĕ çинчен килĕшӳпе пулса пырать. "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе 2006 çулта районти пур категориллĕ хуçалăхсене пĕрле илсен, пирĕн 10330 тонна аш-какай (ял хуçалăх организацийĕсенче – 4250 тонна), 58960 тонна сĕт (ял хуçалăх организацийĕсенче – 13400 тонна), 49040 пин çăмарта (ял хуçалăх организацийĕсенче – 40400 пин штук) туса илмелле. Плансем пысăк, анчах вĕсене пурнăçланине кура район ĕçне хаклĕç. Çак çулпа пырса иртнĕ хĕл кунĕсене районти обществăлла выльăх-чĕрлĕхе пăхакансем, ытти çулхисемпе танлаштарсан,



Кĕртекасси сысна фермин заведующийĕ Н. Иванова перекетлĕхпе паллаштарать.

та ку ĕç ырă йăлана кĕнĕ. Муркаш Енри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çулленех хăйсен ĕçне малта пыракан пĕр-пĕр хуçалăх никĕсĕ çинче пĕтĕмлетеççĕ, малашлăх планĕсене палăртаççĕ, çĕнĕ технологисемпе паллашаççĕ. Кăçал выльăх ĕрчетекенсем çак тĕллевсемпе малтанах Ильич яч. хис. хуçалăхра пулса нумаях пулмасть сыснасем валли хута янă брезент сарайпа, вăл мĕн чуль электроэнерги перекетлеме пулăшнипе паллашрĕç. Хыççăн пĕрешкел условисенчех "Восток" хуçалăх мĕнле майпа малтуртăмлă ĕçлеме пултарнине тишкерчĕç.

– Пĕр условисенчех ыттисем ĕçлеме пултарни çывăракансене ыйхăран вăратасса шанатăп. Чĕркуççи çинчен, хамăр çĕкленмесен, пире никам та тăратмĕ,– терĕ ытарлăн семинар-канашлăва хутшăннă ертӳçĕсемпе зоотехниксене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Районта ял хуçалăхне аталантарасси "Муркаш Енĕн 2006 – 2010 çулсенчи экономикăпа социаллă аталанăвĕ" программăпа тата район администрацийĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ хушшинчи социаллă-экономика хутшăнăçлăрах ирттерчĕç. Хĕл сивви шиклĕх кӳчĕ пулсан та, пур выльăхсен те продуктивлăхĕ ўсрĕ, вĕсен упраналăхĕ лайăхланчĕ, çаксем аш тата сĕт туса илессипе унччĕнхи çул шайне тухма май пачĕç. 12 хуçалăхра аш туса илессипе, 13 хуçалăхра сĕт сăвассипе кăтартусене унччĕнхинчен те ўстерчĕç. Ĕçсене малтуртăмлă йĕркелени кашни ĕнерен сĕт сăвассине 2005 çулхинчен 273 килограмм ўстерсе 2738 килограма çитерме май пачĕ.

Хĕл кунĕсенче тунă ўсĕм кăçалхи кăтартусене малалла аталантарма май парать. Çапла вара пĕрремĕш çур çулта аш туса илесси çулталăк каяллахинчен 15 процент, сĕт 6 процент, çăмарта 18 процент ўсрĕ. Йывăр экономика условийĕсенчех ĕçсене пĕлсе йĕркелесе пырсан производствăна ўстерме пулать. Çакна "Свобода" хуçалăх тĕслĕхĕ çинче те курма пулать. Кунта ертӳçĕпе специалистсем ĕç çине хуçалла пăхнăран кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕсем пуçне 69,4 центнер аш (ку вăл пĕлтĕрхинчен 10,5 процент тата районăн вăтам кăтартăвĕнчен 2,2 хут пысăкрах), 358 центнер сĕт (районăн вăтам кăтартăвĕнчен 2,2 хут пысăкрах) туса илнĕ. Кашмашсемпе Çатракассисенчен питех юлмасăр ĕçлекенсем те çук мар. Акă, сĕт сăвассипе 12 хуçалăх, аш туса илессипе 8 хуçалăх районăн вăтам кăтартăвĕнчен ўсĕмлĕрех ĕçленĕ. Аш туса илес ĕçре сыснасене типĕлле тăрантарас технологие алла илни пысăк тĕкĕ. Сысна ашĕ туса илесси пĕтĕмĕшле калăпăшра 2005 çулта 34,6 процент пулнă пулсан, кăçал ку виçе 40 процента çитрĕ. Çав вăхăтрах мăйракаллă шултра выльăхсен кĕтĕвне чакарни, çав шутра ĕнесене те, шухăшлаттаракан ыйту.



"Свобода" хуçалăха тивĕçлĕ ĕçшĕн – Хисеп грамоти.

Кунта кĕтĕве çĕнетесси уксахлани пирки те каласа хăвармалла. Кăçалхи 6 уйăхра 100 ĕне пуçне 46 пăру илни пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 4 процент сахалрах. 100 ĕне пуçне 12 пушмак пăру кĕтĕвĕ кĕртни те унччĕнхине 3 пуç çитеймест. Кунпа пĕрлех çамрăк выльăхсене самăртассине вĕçне çити татса паманни те кун йĕркинче тăракан ыйту. Пĕрремĕш çур çулта ўстерекен тата самăртма хупнă ушкăнсенчи мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 504 грамм (пĕлтĕрхинчен 3,7 процент нумайрах) ўт хушнă пулсан, 9 хуçалăхăн кăтартăвĕсем районăн вăтам шайĕнчен пĕчĕкрех. Е.Андреев яч. хис., К.Иванов яч. хис., Чапаев яч. хис., "Передовик", "Чемеево" хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри ўт хушаслăхне 500 грамран ирттерме пур майсем те çителĕклĕ. Анчах...

Ултă уйăхра сыснасен талăкри вăтам ўт хушаслăхĕ 344 грампа (çулталăк маларахринчен 6,8 процент ытларах) танлашнă. Çав вăхăтрах Е.Андреев яч. хис., К. Иванов яч. хис., Чапаев яч. хис., "Волга", "Передовик", "Сеятель" хуçалăхсенче лару-тăрăва кая юлмасăр улăштармалли куç умĕнчех.

Ĕнесене улăх-çаранта çўретмелли тата йўнĕ хăйхаклăхпа ытларах сĕт илмелли тапхăр пырать. Кăçал чи пысăк сăвăм "Свобода" хуçалăхра: пĕр ĕне пуçне 2651 килограмм. Пĕтĕмĕшле сĕт сăвассипе вара "Ударник" хуçалăх район производствин 18 процентне йышăнать.

Çўлерех каланисене пĕтĕмлетсен çакă курăнать. Пĕрремĕш çур çулта район 5404 тонна сĕт реализациленĕ (вăтам таварлăхĕ 77 процент). Кунта "Колос", "Сеятель", "Хлебороб", "Чемеево", К. Иванов яч. хис., Мичурин яч. хис. хуçалăхсем района самай каялла туртрĕç. Çавăн пекех производство тата реализаци калăпăшĕсене Чапаев яч. хис., "Лидер", "Ударник", Ленин яч. хис. хуçалăхсем чакарни те курăнать. Сĕт сăвассине чакарни, пĕрремĕш çур çулхи хаксемпе пăхсан, пĕтĕмĕшле 2 миллион та 900 пин тенкĕпе танлашать.

Сĕт реализациленин хакĕ пирки. Кунта районăн пĕр центнершăн тивекен вăтам реализаци хакĕ 615 тенкĕ. Ку вăл иртнĕ çулхинчен (611 тенкĕ) пит пысăках мар. Çав вăхăтрах пĕр центнер сĕте "Рассвет" агрофирма 341 тенкĕпе реализациленĕ пулсан, "Лидер" агрофирмăра вăл 730 тенкĕ пулнă.

Районĕпе илсен, сĕт реализацилесе хуçалăхсем 6 миллион та 544 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Ку вăл, çулталăк каяллахипе танлаштарсан, 4 миллион та 380 пин тенкĕ пĕчĕкрех. Тупăш чакнин тĕп сăлтавĕ – сĕт хăйхаклăхĕ ўсни. Кунта апатсен хакĕ пысăкланни, ĕç укçине хăпартни витĕм кўреççĕ.

Пĕрлешўллĕ хуçалăхсем çулталăк каялла мăйракаллă шултра выльăхсен ашĕнчен пĕтĕмпе 1533 пин тенкĕлĕх тăкак тўснĕ пулсан, кăçал 1827 пин тенкĕ тупăш илме пултарнă. Рентабельлĕх 6,7 процент.

Мăйракаллă шултра выльăхсен ашне туса илессипе чи ăнăçлă лару-тăру "Передовик" ял хуçалăх производство кооперативĕнче. Хуçалăх 59,3 процент рентабельлĕхпе 243 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Ку тĕлĕшпе "Ударник", "Оринино", Суворов яч. хис. хуçалăхсем те ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Малтуртăмлă ĕçлекенсемпе пĕрлех К. Иванов яч. хис., "Колос", "Сеятель" хуçалăхсем çак ĕçре тăкак тўсни районта татса паман ыйтусем те пуррине кăтартса парать.

Сысна ашĕ реализациленни района финанс тĕлĕшĕнчен пысăк тĕкĕ пани курăнать. Кунта пĕрлехи тупăш 8 миллион та 213 пин тенкĕпе танлашать (çулталăк каяллахинчен 47 процент пысăкрах). Рентабельлĕх те 1,7 хут ўссе 22 процента çитрĕ. Куратпăр, сысна ĕрчетесси районта малти вырăна тухса пырать. Сыснасен йышĕ пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çулхинчен районĕпе 41 процент ўснĕ пулсан, "Передовик" хуçалăхра ăна чакарни ыйту çуратать.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пирки калаçнă чух выльăх апачĕ çинче чарăнса тăмасăр та иртме çук. Иртнĕ хĕл кунĕсем паха апатсăр выльăхран продукци илессине ўстерме çуккине çирĕплетсе пачĕç ĕнтĕ. Июлĕн 28-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсем 8030 тонна утă, 21018 тонна сенаж, 11251 тонна силос хатĕрленĕ. Каламалла, апат хатĕрленĕ май унăн пахалăхне те тĕрĕслесех тăмалла. Ахальлĕн выльăх ĕрчетес ĕçре суккăрла ĕçлемелле пулса тухать. Апат хатĕрленĕ вăхăтрах фермăсене çитес хĕле кĕме хатĕрлесси те кун йĕркинчен тухмалла мар. Кунта фермăсене сентябрĕн 15-мĕшĕччен хĕле хатĕрлесе çитерме тăрăшмаллине манас çук, фермăсенче юсав ĕçĕсем тунипе пĕрлех сарайсене дезинфекцилесси тата шуратасси пирки те асрах тытмалла. Паянхи куна вара 8 хуçалăхра кăна сарайсене шуратнă. Ку питех те çителĕксĕр.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхрен ытларах продукци илес тесен ветеринари ыйтăвĕсене те иккĕмĕш плана хăварма юрамасть. Паянхи куна пăрусене сыхласа хăварассипе "Свобода", "Лидер", "Оринино", "Восток", "Волга" хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлеççĕ пулсан, Чапаев яч. хис. тата "Рассвет" хуçалăхсенче ку тĕлĕшпе татса паман ыйтусем пурха.

Выльăх-чĕрлĕх отраслне пырса тивекен кашни ыйтăвах пĕрле татса парсан çеç продукци илесси çўллĕ шайра пуласси пирки ĕмĕтленме пулать.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

## Ĕçпе палăрнисем



Е.А.Кириллова ĕне сăвакан ("Свобода").



С.А. Иванова сурăх пăхакан ("Герой").

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ

# Çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе мала тухнисем паллă

**Выльăх пăхакансен семинар-канашлăвĕ тĕлне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен 2006 çулхи пĕрремĕш çур çулти экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен калакан йышăнăвне алă пусрĕ. Халĕ çĕнтерўçĕсем паллă.**

1. 2006 çулхи пĕрремĕш çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе, хĕл тапхăрне шута илсе, экономика ăмăртăвĕн çĕнтерўçи тесе çаксене йышăнас тата вĕсене район администрацийĕн Хисеп Грамотипе наградăлас:

1.1 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне 69,4 центнер аш-какай, 358 центнер сĕт туса илнĕшĕн, пĕр ĕне пуçне 2654 килограмм сĕт сунăшăн, сыснасен талăкри вăтам ўт хушаслăхне 454 грама, мăйракаллă шултра выльăхсен ўт хушаслăхне 635 грама çитернĕшĕн тата выльăхсен кĕтĕвне 99 процент сыхланăшăн "Свобода" хуçалăха (председателĕ К.Е.Сретинский);

1.2 Кашни ĕнерен 3265 килограмм, фермипе 323 тонна сĕт сунăшăн "Свобода" хуçалăхăн Кашмашри сĕт фермине (ферма заведующийĕ Ю.А.Петровский);

1.3 Мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 879 грамм (фермăри пĕрлехи ўт хушаслăх 17 тонна) ўт хушнăшăн "Оринино" хуçалăхри Орининти мăйракаллă шултра выльăхсене самăртакан фермăна (заведующийĕ Л.Г.Игнатьева);

1.4 Самăртма хупнă сыснасем талăкра вăтамран 790 грамм (фермăри пĕрлехи ўт хушаслăх 47 тонна) ўт хушнăшăн "Лидер" агрофирма" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Сыпайри сысна фермине ( заведующийĕ Г.И.Яковлев).

2. Ял хуçалăх производствинчи пысăк кăтартусемшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн тав çырăвĕсемпе çаксене наградăлас:

– **Елена Алексеевна КИРИЛЛОВАНА,** "Свобода" хуçалăхри машинăпа ĕне сăвакана, кашни ĕнерен 2983 килограмм сĕт сунăшăн;

– **Татьяна Ипполитовна УХВАРИНАНА**, Турай участокĕнчи ветлечебница заведующине, çирĕплетнĕ участокра ветеринари ĕçĕсене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçланăшăн;

– **Зинаида Ивановна ШАДРИНАНА,** "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикинчи чăх пăхакана, пĕр чăх пуçне 1,34 апат единици пĕтерсе 156 çăмарта илнĕшĕн тата чăх-чĕп йышне 97,3 процент сыхласа хăварма пултарнăшăн;

– **Светлана Алексеевна ИВАНОВАНА**, "Герой" хуçалăхри сурăх пăхакана, кашни сурăхран 4,7 килограмм çăм каснăшăн тата 100 сурăх пуçне 105 путек илнĕшĕн;

– **Геннадий Игнатьевич ЯКОВЛЕВА**, "Лидер" агрофирма" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Сыпайри сысна фермин заведующине, сысна ĕрчетес ĕçре çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртнĕшĕн;

– **Рита Евгеньевна ГОРШКОВАНА**, "Оринино" хуçалăхри мăйракаллă шултра выльăх самăртакана, выльăхсене талăкра вăтамран 1185 грамм ўт хуштарнăшăн.